Тус пулсассăн питĕ лайăх,
Çухатсассăн пурнăç япăх.
Питĕ йывăр вăхăтра
Çывăх тус ялан çумра.
Пĕр-пĕрне ăнланмалла,
Туслăха упрамалла.
**Ольга Савельева.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

Шкулăм, манăн шкулăм,
Саватăп эп сана!
Асра ялан эс юлăн,
Ăс патăн эс мана!
Шкулăм, манăн шкулăм,
Уçсам эс алăкна.
Мĕнпур ача-пăчу
Вырнаçĕ ытамна.
**Савелий Порфирьев.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

Вăхăт иртет, сисĕнмест,
Никама та вăл кĕтмест.
Килĕшекен ĕç çинчен
Шутламалла майĕпен.
Пуласшăн эпĕ музыкант,
Анчах çитĕ-ши талант?
**Эрнест Слюсарь.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

Йытă çури вăтанать
Сĕтел айнелле тарать.
Лартса патăм аш яшки,
Йыт çури – чи телейли!
Никамран халь ютшăнмасть,
Сĕтел айне пытанмасть.
**Вика Федорова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

Пирĕн пур кушак çури
Чи лайăххи, чиперри.
Мана пĕрмаях кĕтет,
Мĕн калатăп – веç итлет.
Выляма килĕштерет,
Маттурскер, тĕлĕнтерет.
Юрататăп кушака
Манăн пĕчĕк тусăма.
**Юлия Петрова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

Тилĕ ула курака
Йыхравларĕ тĕл пулма.
Ĕмĕтленчĕç, тупата
Тутла чăкăт шырама.
Шухăшларĕç вăрахчен
Хĕвел анса лариччен.
Кăлăх сăмах çапиччен

Ĕçлес мар-и ыриччен?
Ĕç хăех тăрантарать,
Тутлă чăкăт та парать.
**Ксения Шумилова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

Шкул умĕнчи хурăнсем
Пит илемлĕ «пикесем».
Кашни ир кĕтсе илеççĕ,
Ырă кăмăл парнелеççĕ.
Ӳсĕр-ӳсĕр çӳлелле –
Тӳпене, пĕлĕтелле.
Савăнтарăр çынсене,
Уçă сывлăш – вĕсене!
**Вероника Тихонова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

Авăн уйăхĕ çитсессĕн,
Тăван шкулăма килсессĕн
Эп тĕл пултăм туссене,
Саламларăм вĕсене.
Вĕренĕпĕр тăрăшса
Пĕр-пĕринпе савăнса.
Эпир килнĕ ăс пухма
Вăхăт çук халь выляма.
**Андрей Павлов.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

Тăван кĕтес – Чăваш Ен,
Ман чунăма эс сиплен!
Çулсеренех аталан,
Ӳс, вăйлан та пысăклан!
**Степан Николаев.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

Йăмăкпала иксĕмĕр
Туслă пурăнатпăр,
Пĕр-пĕрин çине пăхса
Хыттăн савăнатпăр.
Кашни кун Анжелăпа
Теттелле вылятпăр,
Кичем мар мана унпа –
Савăк пурăнатпăр.
**Даша Корнеева.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 13-мĕш шкул.**

Кукамая саламларăм
«Ваттисен кунĕ» çитнипе,
Телей те сывлăх сунтăм
Малашнехи пурнăçĕнче.
Çичĕ ача эсир ӳстернĕ
Кукаçипе иксĕрех,
Тулли телей пилленĕ
Утма çак аслă тĕнчере.
Ватлăхра пĕччен юлмарăн
Кукаçи тек çук пулсан та,

Çич ачапа вун т(ă)ват мăнук
Пăрахмĕç сана нихăçан та.
**Максим Леонтьев.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.**

Эп юрататăп манăн тăван çĕр-шыва:
Вăрмансене, уй-хирсене, юханшыва,
Аппана, аттепе аннене,
Тăвансене, юлташсене.
Çумăрлă çанталăк та мана килĕшет,
Манăн савăнса юрлассăм килет!
**Валентина Вахтеркина.**
**Шупашкар, 4-мĕш гимнази.**

**Пысăк телей**
Лайăх ăнланатăп эп:
Мĕн вăл çĕр çинче телей?
Аттепе анне пулсан
Чун-чĕрем телейлĕ ман!
Чăн та, мĕн-ши вăл телей?
Кашни çыннăн – тĕрлĕрен.
Маншăн – аттепе анне,
Сывлăх, тантăшсем, çемье.
Чăн та, çакă вăл телей –
Аттепе анне пурри!
Ялкăштăр ялан хĕвел,
Пултăр пур çĕрте те мир!
**Илья Скворцов.**
**Çĕмĕрле, 3-мĕш шкул.**

**Кĕрхи шухăшсем**
Сарă çулçăсем ӳкеççĕ,
Текех вĕсем ешерес çук.
Ăшă кунсем иртсе пыраççĕ,
Вĕсем калла таврăнас çук.
Тваттăмĕш класа эп çитрĕм,
Текех эпĕ пĕчĕк мар,
Кĕрхи çулçă пек эп ӳкмĕп,
Сив çанталăк мана хăруш мар.
**Владислав Яштаков.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.**

Тăван кĕтес – Чăваш Ен,
Ман чунăма эс сиплен!
Çулсеренех аталан,
Ӳс, вăйлан та пысăклан!
**Степан Николаев.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

**Кукамай парни**
Илсе пачĕ кукамай
Çĕнĕ пукане.
Ячĕ хатĕр ун валли
Хитре пулнипе.
Илемпи тесе чĕнетĕп
Хамăн çĕн туса.

Çĕрле пĕрле çыврататăп
Чипер юлташа.
Вăхăчĕ сахал çав хамăн
Унпа выляма.
– Уроксем-çке тумалла,
Ăнланăр-ха мана!
Пурпĕрех пире пит лайăх
Çĕнĕ тусăмпа.
Пысăк тав сăмах калатăп
Хам кукамая!
**Кристина Александрова.**
**Канаш районĕ, Катек.**

Паян юр çăвать,
Кĕçех хĕл ларать.
Ăшă тăхăнатпăр,
Чунтан савăнатпăр!
Тухатпăр урама
Юр кĕлетке тума.
Вылятпăр, кулатпăр,
Чунтан савăнатпăр!
**Денис Васильев.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 18-мĕш лицей.**

**Хура кĕркунне**
«Çитрĕ ылтăн кĕркунне», –
Тетчĕç уйăх каялла.
Пăхăр халĕ урама –
Тăрать хура кĕркунне.
Çулçă ӳкнĕ çĕр çине,
Курăк типнĕ уй-хирте,
Кайăк-кĕшĕк юрламасть,
Хурт-кăпшанкă найлатмасть.
Сивĕ çилĕ вĕркелет,
Юр пĕрчийĕ ӳккелет.
Тĕттĕм каçсем çывхараç,
Хĕл çитнине палăртаç.
**Вероника Теникова.**
**Çĕмĕрле, 3-мĕш шкул.**

**Ман çĕр-шыв – Чăваш çĕр-шывĕ**
Ман çĕр-шыв – Чăваш çĕр-шывĕ,
Юрататăп эп сана.
Хирӳсем те, шывусем те –
Пурте çывăх-çке мана.
Ман çĕр-шыв – Чăваш çĕр-шывĕ,
Кăмăллатăп эп сана.
Хăв илемӳпе, çĕр-шывăм,
Тыткăнлатăн чунăма.
Ман çĕр-шыв – Чăваш çĕр-шывĕ,
Мухтанатăп эп санпа.
Ывăл-хĕрӳсем патваррăн
Тӳпене çĕклеç ятна.
Ман çĕр-шыв – Чăваш çĕр-шывĕ,
Пуç таятăп умăнта.
Ӳстеретĕн паттăр-сывă

Йăх тăсакан ăрăва.
Ман çĕр-шыв – Чăваш çĕр-шывĕ,
Пул эс яланах çумра.
Санăн хăвату-чапу та
Кайччăр кунран кун мала.
**Павел Чернов.**
**Елчĕк районĕ, Елчĕкри шкул.**

**Симĕс курăк**
Кăпăшка юр айĕнче
Симĕс курăк тĕлĕрет.
Шурă юрăн хўттинче
Çуркуннеччен вăй илет.
Хĕл хĕвелĕ майĕпен
Ăшшăн пăхать тўперен:
«Симĕс курăк, ан васка,
Çуркуннеччен кăшт тăхта».
**Лилия Жаровцева.**
**Шупашкар, 62-мĕш шкул.**

Манăн юратнă кушак пур,
Ирех тăрать çăвăнать,
Манăн шăппăн вăратать,
Çиес килнине систерет.
Хăйĕн хитре куçĕпе
Илĕртўллĕн вăл пăхать,
Хурса панă апатне
Питĕ тутлăн вăл çиет.
**Яна Илларионова.**
**Шупашкар, 28-мĕш шкул.**

**Хĕллехи кунсем**
Çитрĕç хĕллехи кунсем –
Урамра мĕнле хитре!
Шап-шурах уйсем, хирсем –
Савăнăç çиçет питре.
Юрататăп хĕллене,
Йĕлтĕр, коньки хатĕрлетĕп.
Ак, канмалли кунсенче
Ярăнса эп киленетĕп.
Çĕнĕ Çул уявĕшĕн
Юрататăп хĕллене.
Савăнăç вăл пирĕншĕн –
Хĕл Мучи парать парне!
Чăрăш тавра çаврăнар,
Юрлар, ташлар, савăнар
Тата сăвăсем калар,
Пĕр-пĕрне телей сунар.
**Алексей Магазеев.**
**Шупашкар, 40-мĕш шкул.**

**Шупашкар**
Шупашкар, Шупашкар!
Хуламăрпа мухтанар!
Ыр сунар ăна ялан:
«Чечеклен те аталан!»

Шупашкар, Шупашкар!
Халăхĕ мĕнле патвар!
Çапла пултăр ĕмĕрех!
Саншăн çеç çунать чĕре!
**Ольга Портнова.**
**Шупашкар, 31-мĕш шкул.**

**Илемпи**
Илсе пачĕ кукамай
Çĕнĕ пукане.
Ячĕ хатĕр ун валли
Хитре пулнипе.
Илемпи тесе чĕнетĕп
Хамăн çĕн туса.
Çĕрле пĕрле çывратпăр
Чипер юлташа.
Вăхăчĕ сахал çав хамăн
Унпа выляма.
– Уроксем-çке тумалла,
Ăнланăр-ха мана!
Пурпĕрех пире пит лайăх
Çĕнĕ тусăмпа.
Кулленех эп тав тăватăп
Хам кукамая!
**Кристина Александрова.**
**Канаш районĕ, Катек.**

**Çĕнĕ çул**
Килсе çитрĕ Çĕнĕ çул,
Килсе çитрĕ васкаса
– Кивĕ çулĕ, сывă пул! –
Ăсататпăр савăнса.
Юрпикепе Хĕл Мучи
Çитрĕç паян хăнана,
Кутамккийĕ Хĕл Мучин
Хавас кӳрĕ уява!
**Виктория Захарова.**
**Йĕпреç районĕ, Пучинке.**

Хĕлле çитрĕ, çил вĕçтерчĕ,
Пĕрремĕш юр та лăпкăн ӳкрĕ.
Пӳртре анне ăшшăн юрлать,
Йăмăка çывăрма вырттарать.
**Елена Смирнова.**
**Шупашкар районĕ, Хыркасы.**

Тăван ялăм шав аталанать,
Иртнине те тĕплĕн вăл упрать.
Пурнăç сисĕнмесĕр улшăнать,
Кăйкăр пек малтан мала пăхать.
Ялăма илемлетес шутпа
Çакăнтах çурт лартăп та кайран
Çитĕнтерĕп йывăçсем – йăмра!
Ялăма парнелĕп герб тата ялав.
**Анастасия Сетейкина.**
**Çĕмĕрле, 3-мĕш шкул.**

Анне мана юратать,
Ырă сăмахсем калать,
Лăпкать, ачашлать,
Лайăх çын пулма сунать.
**Ирина Константинова**
**Вăрмар районĕ, Шăхаль ялĕ.**

Манăн анне
пит илемлĕ,
пултарullă
та ĕçчен.
Аннене эп юрататăп,
Ĕçлеме те пулăшатăп.
**Виктория Романова.**
**Шупашкар, 43-мĕш шкул.**

Акă иртрĕ кивĕ çул,
Килсе çитрĕ Çĕнĕ çул.
Пĕр-пĕрне эпир сунатпăр
Сывлăх, телей, ăнăçу.
Хĕл Мучипе Юрпике
Килчĕç хăнана паян,
Пирĕнпеле савăнма
Кăмăл пур вĕсен ялан.
**Дарья Федорова.**
**Йĕпреç районĕ, Пучинке.**

Савăнсах хĕлле вылятăп,
Юр чăмăркки ывăтатăп,
Уява кĕтсех тăратăп,
Тĕлĕнтермĕше шанатăп.
**Юля Степанова.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул.**

Куславкка – тăван хуламăр,
Атăл хĕрринче ларать.
Вăл пит паллă пулмасан та
Манăн чун ăна савать.
Крутышкăпа Пушкин тăвĕ
Хыр йывăçĕплее пуян,
Атăл хĕррине çитсессĕн –
Хăвна кайăк пек туян.
Кайăк пек вĕçсе сăнатăн
Тăван тавралăх илемне!
Куславкка! Тăван хуламăр,
Сана манмăп ĕмĕрне!
**Мария Якубова.**
**Куславкка, 3-мĕш шкул.**

Хĕлле çитрĕ, юр та çурĕ –
Тавра шур тум тăхăнчĕ.
Çырмасенче каток пулчĕ –
Пĕтĕм ача савăнчĕ.
**Денис Данилов.**
**Йĕпреç районĕ, Пучинке.**

Эпĕ хамăн аннене
Питĕ юрататăп.
Паян уяв ячĕпе
Сан çинчен юрлатăп.
Пул эс сывă яланах,
Ан чирле, ан ватăл.
Эп сана, анне, чăнах
Питĕ юрататăп!
**Вика Гоголева.**
**Шупашкар, 61-мĕш шкул.**

Акă ир-ирех паян
Хĕвел пăхать кантăкран.
Вăл мана: «Вăран эс», – тет,
Кăтăклать те чĕпĕтет.
Сиксе тăтăм частарах,
Питe çурăм васкасах.
Анне хушнă ятпала
Утрăм эп вăрманалла.
Хамăнпа пĕрле вара
Эпĕ илтĕм Кампура.
Вăл манран малта пырать,
Мана сукмак кăтартать.
**Ангелина Петухова.**
**Елчĕкри вăтам шкул.**

Кăшарни уявĕ çитрĕ –
Шартлама сив кунсем,
Каникул та хыçа юлчĕ,
Шкулалла каллех çулсем.
Сив кунсен асамлăхĕ –
Пас тытнă йывăçсем.
Ӳкерчĕкре асăнмалăх
Юлчĕç çырăнса вĕсем.
**Аня Кирпичева.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.**

Акă çитрĕ Çĕнĕ çул!
Юр купи те пирĕн пур!
Ачасем пит савăнаççĕ,
Пĕтĕм кăмăлтан юрлаççĕ.
Хĕл Мучи те савăнать,
Вăл пире парне парать.
**Анна Гаврилова.**
**Шăмăршă районĕ, Карапай-Шăмăршă.**

«Юратнă аннеçĕм, мĕнле эс чипер, –
Калатăп сана çакна чĕререн. –
Сана пулăшма эп хатĕр ялан,
Урай, чашăк-тирĕк çăватăп куллен,
Шкула та чупатăп ирпе кунсерен».
**Арина Гаврилова.**
**Шупашкар районĕ, Хыркасы.**

Аннем! Юратнă, хаклă, манăçми!
Мĕнех тата калам-ши сан çинчен?
Çĕр çывăрмасăр, ывăнма пĕлми
Ман калаçас килет санпа ирччен.
Аттем! Çемье тĕрекĕ маншăн эс,
Вĕрентрĕн юратма эс пур ĕçе.
Пуçа тайса сире ман хисеплес,
Упрас çут сăнăра хам чĕрере!
**Антон Мозяков.**
**Çĕмĕрле, 3-мĕш шкул.**

Çитрĕ килчĕ сивĕ хĕл,
Тĕнчене шап-шурă турĕ.
Хăйĕн юр пĕрчисемпе
Пурне те савăнăç вăл кӳчĕ.
Ялсенче мăрьесенчен
Тĕтĕм тӳпенелле явăнать,
Ача-пăча çырмара
Çунашкапа ярăнать.
**Вера Сергеева.**
**Çĕрпӳ, 2-мĕш шкул.**

Çанталăк сивĕтет,
Ак хĕлле те çитет.
Пур çĕрте те шурă юр,
Манăн çирĕп йĕлтĕр пур.
Юрататăп хĕллене,
Ярăнатăп йĕлтĕрпе.
Вĕçет-вĕçет юр пĕрчи,
Савăнать ачи-пăчи.
**Роман Краснов.**
**Шупашкар, 64-мĕш шкул.**

Юрататăп хĕллене,
Маншăн вăл хитре парне.
«Нихăçан ан кай, хĕлле», –
Савăнар санпа пĕрле.
**Яна Елисеева.**
**Шăмăршă районĕ, Карапай-Шăмăршă.**

Манăн анне чи хитри,
Чи ырри, чи илемли.
Эпĕ ăна юрататăп,
Сывлăхпа телей сунатăп.
**Диана Зинонова.**
**Шупашкар, 43-мĕш шкул.**

Çĕрĕпех шур юрĕ çурĕ,
Тĕнчене шап-шурă турĕ.
Хĕл Мучийĕ сивĕпе
Пăрлантарчĕ пĕвене.
Ача-пăча савăнса
Яранăть халь конькипе.
Сăрт çинче те питĕ шавлă –
Пур ача та çунашкаллă.
Мĕн тери тата хитре

Ярăнмашкăн йĕлтĕрпе.
**Виктория Арсентьева.**
**Йĕпреç районĕ, Пучинке.**

Йĕлтĕрпе эпир пыратпăр
Хĕллехи вăрманпала,
Уçă сывлăшпа сывлатпăр
Кăкăр туллин савăнса.
– Шăп пул, – тет мана атте, –
Тимлĕ итле шăплăха.
Вăрманти асамлă шăплăх
Сиплĕ пулĕ сывлăха.
**Диана Мингалиева.**
**Çĕнĕ Шупашкар, 20-мĕш шкул.**

Ĕнер çурĕ шурă юр,
Урама эс тухса кур.
Ачасем пит савăнаççĕ,
Юр купи тума васкаççĕ,
Конькипе те йĕлтĕрпе
Ярăнаççĕ кунĕпе.
**Лилия Захарова.**
**Шăмăршă районĕ, Карапай-Шăмăршă.**

Паян ӳкрĕ шурă юр.
Ачасем ялан маттур:
Юр купи тӳрех тăваççĕ –
Вĕсем юршăн савăнаççĕ.
**Яна Елисеева.**
**Шăмăршă районĕ, Карапай-Шăмăршă.**

Куславкка тăрăхĕнче
Пурăнмашкăн ырă.
Анлă, тулăх хирсенче
Каш-кашлать сар тырă.
Чăвашсем ку çĕр çинче
Вырăспа туслашнă,
Ытти халăх та кунта
Тĕп илсех вырнаçнă.
Тутарсем те юнашар
Пирĕнпе пурнаççĕ.
Вĕсен чунĕ шĕл кăвар,
Пит хитре юрлаççĕ.
Эх, епле çак таврара
Атăл шывĕ сарлака!
Шыва кĕрĕр ахлатса,
Пулă тытăр савăнса!
**Анна Петрова.**
**Куславкка, 3-мĕш шкул.**

Чи хаклă çын – анне,
Вăл тĕнчере пĕрре.
Анне, эс ман анне,
Эс çав тери хитре!
Анне, эс – манăн чунăм!
Эс – манăн тус-юлташ.

Иртмест-çке сансăр кунăм,
Эс çук чух вăрăм каç.
Киле çитсен унта анне,
Вăл яланах ĕçлет хирте.
Атте те пулăшать ялан
Килти ĕçре те пурнăçра.
Эп ĕненетĕп, ĕненетĕп,
Анне вăл манăн чи ăсли.
Эп йăнăшмарăм, йăнăшмарăм,
Анне вăл манăн чи хакли.
**Ангелина Петухова.**
**Елчĕкри вăтам шкул.**

**Аннене пулăшатăп**
Манăн анне чи хитри,
Чи сăпайли, чи вăйли.
Ĕçлеме вăл юратать,
Ĕçлесен вăл ывăнать.
Çавăнпа та аннене
Пулăшатăп тăрăшсах:
Шыв йăтса, урай шăлса,
Чашăк-тирĕке çуса.
**Дарья Федорова.**
**Йĕпреç районĕ, Пучинке.**

**Хĕллехи вăрман**
Тĕлĕрсе ларать вăрман
Шурă мамăк айĕнче.
Шалалла кĕрсен куран:
Тĕлĕнтермĕш ку тĕнче!
**Виктория Захарова.**
**Йĕпреç районĕ, Пучинке.**

**Автан**
Автан килчĕ пасартан,
Çитрĕ шавлă хуларан.
Паян автан пит пуян –
Тем чуль тетте туяннă:
Пур халь унăн параппан,
Пукане, пӳске, баян.
**Александра Краснова.**
**Йĕпреç районĕ, Пучинке.**

**Урамра**
Эпĕ тухрăм урама
Ачасемпе выляма.
Турăмăр юр кĕлетке
Эпир туссемпе пĕрле.
Купаларăмăр каçчен,
Ал-ура ывăниччен.
Кĕтĕм хăвăртрах киле
Чей ĕçме, яшка çиме.
**Мария Степанова.**
**Йĕпреç районĕ, Пучинке.**

Эпĕ тухрăм урама

Юлташсемпе выляма.
Йĕлтĕрсем çине тăратпăр,
Çунашкапа ярăнатпăр.
Мĕнле лайăх-çке хĕлле
Шурă юрпа выляма.
Выляса пит ĕшенсен
Килелле хавас чупма.
**Зоя Петрова.**
**Йĕпреç районĕ, Пучинке.**

**Çĕн кĕпе**
Кайрăм эпĕ Канаша
Çĕнĕ кĕпе туянма.
Эп çӳрерĕм пасарта
Хитре кĕпе шыраса.
Куçăм-пуçăм алчăрарĕ
Пасар таварне курсан.
Çавах тупрăм хитрине,
Чаплине, йăлтăрккине –
Çĕнĕ çул валли кĕпе!
**Виктория Арсентьева.**
**Йĕпреç районĕ, Пучинке.**

**Çурхи уяв**
Кашни уяв çитмессерен
Тулать савăнăçпа чĕрем.
Паян уяв хĕрарăмсен –
Асаннесен те аннесен.
Кукамайпа асаннене
Саламлăпăр çемйипелех!
Йăмăксене, аппасене
Сунатпăр ăнăçу, телей!
Çитет куллен хĕвеллĕ ир,
Аннеçĕм вăратать мана:
«Ман пĕчĕк ывăлăм, тăрсам,
Асаннӳне саламлама!
Парнелĕн тутăр юратса,
Ан ман эс юрă юрлама!»
Аттепеле пичче вара
Торт парнелерĕç аннене,
Вĕсем тухмасăр кухньăран
Апат пĕçерчĕç кунĕпе:
Пылак кукăльсем, хуплу,
Салат, сар чăх яшки, шаркку...
Аннеçĕм, савăн! Кĕрекӳ
Сан пултăр яланах тулли!
**Илья Скворцов.**
**Çĕмĕрле, 3-мĕш шкул.**

Çуркунне хĕвел пăхать,
Шăпчăк юрă та юрлать,
Шыв юхать, юр ирĕлет –
Çулла çитессе пĕлтерет.
**Мария Семенова.**
**Шупашкар, 4-мĕш гимнази.**

Килчĕ, килчĕ çуркунне
Хĕвел пăхать янкăр.
Шăнкăртатса шыв юхать
Тăван Атăл тăрăх.
Илтĕнеççĕ вăрманта,
Хитре кайăк сассисем.
Йĕри тавра урамра
Симĕсленеç йывăççем.
**Анна Пантелеймонова.**
**Шупашкар, 4-мĕш гимнази.**

Вĕçсе килчĕç шăнкăрчсем
Васкаса тăван ене.
Шăрантараç юрăсем –
Ырласа çуркуннене.
Хатĕрлерĕç ачасем
Йăвасем хыпаланса.
Çакса пачĕç вĕсене
Йывăç çине хăпарса.
**Даниил Данилов.**
**Канаш районĕ, Катек шкулĕ.**

Анне мана юратать,
Çепĕç  сăмахсем калать.
Кам пире мĕн ачаран
Çупăрлать хыт макăрсан –
Паллах, юратнă анне.
Ӳстернĕшĕн лăпкаса
Пуç таятăп сан умра.
**Вероника Соловьева.**
**Шупашкар, 36-мĕш шкул.**